Хаваслă каникул кунĕсенче

# Пĕрремĕш шăнкăрав урока йыхравлĕ

***Пурнăç паян шкулсем умне çĕнĕрен те çĕнĕ тĕллевсем кăларса тăратать. Вĕсене пурнăçлама вара ĕçе çĕнĕлле йĕркелесе пыма пĕлни кирлĕ. Шкулсен тарăн пĕлӳ парассипе кăна мар, пахалăхлă воспитани парассипе те нумай тимлемелле, ăна татăклăн мар, çулталăк тăршшĕпех туса пымалла. Чуманкассинчи вăтам шкул шăп та лăп çак тĕллевсене мала хурса ĕçлесе пырать паянхи кун. Çу вăхăтĕнче те кунта 3 смена лагерь ĕçлерĕ. Шкул ачисен çуллахи канăвне епле йĕркеленипе кăсăкланса çак шкула çитрĕм. Илемлĕ клумбăсемпе киленнĕ май шкул директорне В.М. ВАСИЛЬЕВА ачасен ĕçпе канăвĕ пирки каласа пама ыйтрăм:***



– Пирĕн учительсен коллективĕ вĕрентӳ тата воспитани парас ĕçре ачасен сывлăхне чи мала хурса ĕçлесе пырать. Сывлăхлă ача çеç тарăн пĕлӳ илме пултарать. Çавăнпа эпир ку ыйту çине çуллахи вăхăтра та питĕ пысăк тимлĕх уйăратпăр. Вĕренӳ çулĕ вăхăтĕнчех çуллахи вăхăтра пахалăхлă ĕçлесе пыма план хатĕрлетпĕр. Кун пирки шкул конференцийĕнче канашлатпăр. Çуллахи лагерь начальникĕсем тата воспитательсем пулма палăртнă учительсем ятарлă методика литературине тишкереççĕ, ачасен канăвĕ пур енлĕн пулса пытăр тесе маларах тăрăшма пуçлаççĕ. Çапла вара кашни çул шкулта ĕçпе кану, сывлăха çирĕплетмелли тата профильлĕ лагерьсем ĕçлеççĕ. Кунсăр пуçне ĕç бригадисем, шкулти лесничество тата строительство отрячĕсем те анлă сарăлнă.

Кăçалхи каникул вăхăтне илес пулсан та пурĕ 170 ача шкула килсе тăчĕ. Сывлăха çирĕплетмелли лагерь виçĕ смена, ĕçпе кану лагерĕ виçĕ смена тата пĕр смена профильлĕ лагерь ĕçлерĕç. Эпир районти социаллă хӳтлĕх пайĕпе, халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрпа пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ тачă ĕçлесе пыратпăр. Çавăнпа та çуллахи вăхăтра ачасен сывлăхне çирĕплетме тата ĕçпе канăвне лайăх йĕркелеме майсем тупса панăшăн район администрацине пысăк тав сăмахĕ калас килет. Санэпидемстанци ĕçченĕсем те тав сăмахне тивĕç, мĕншĕн тесен вĕсем пăхса тăнипе ачасен апатланăвне тĕрĕс йĕркелесе пырасси пурнăçланать. Пушар хуралĕнче вăй хуракансем те ачасен хăрушсăрлăхĕшĕн тăрăшса шкула тĕрĕслевсемпе пырса каяççĕ. Çапла вара пур енлĕн пăхса тăни ачасен каникулне туллин irттерме май парать.

**– Паллах, учительсен тăрăшулăхĕсĕр çуллахи вăхăтри ачасен ĕçĕпе канăвĕ интереслĕ пулаймасть...**



– Çапла. Лагерь начальникĕсемпе воспитательсем хăйсен ĕçне пысăк яваплăха туйса пĕтĕм кăмăлтанах пурнăçласа пыраççĕ. Кăçал çулла лагерь начальникĕсем пулса ĕçленĕ В.Н. Николаева, Т.А. Павлова тата В.Ф. Иванов ачасен шанăçне тӳрре кăларас тесе нумай тăрăшрĕç. А. В. Васильева, С.В. Алексеева, С.А. Кузьмина, В.Э. Федорова, Н.Ю. Степанова, Н.Н. Замятина воспитатель ĕçне туллин пурнăçларĕç. Вĕсемпе ачасене интереслĕ пулчĕ. Çавăнпа çăвĕпех шкултан ачасем татăлмарĕç.

Учительсемпе ачасем тăрăшнипех шкул территорине тирпей-илем кĕртрĕмĕр. Хĕлле хатĕрленĕ плансем тăрăх çуркунне чечек клумбисем йĕркелерĕмĕр, шкул пахчинчи йăрансене хатĕрлесе пахча çимĕç вăррисене акрăмăр. Халĕ вара тухăç илетпĕр, илемлĕ чечексем пурин кăмăлне те çĕклеççĕ. Т.М. Иванова, А.И. Морозова тата Е.И. Кадыкова учительсем нумай тимлерĕç çак ĕçсенче. Чăваш Республикин Çурт-йĕр министерстви irттерекен конкурса «Пирĕн чечекленекен шкул» проект тăратрăмăр. Кунсăр пуçне лагерьсем те районти тĕрлĕ конкурссенче малтисен ретĕнче пулма пултарчĕç.

**– Районти ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă çуллахи вăхăтра вĕренекенсем ĕçлеме ӳркенмеççĕ-и?**

– Пирĕн ачасем ĕç бригадисенче тăрăшсах ĕçлеççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсен ĕçĕ тӳлевлĕ майпа пулса пырать. Халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă вĕсем укçа ĕçлесе илсе хăйсене валли самаях тĕкĕ тăваççĕ. Çулла июнь тата август уйăхĕсенче пурĕ 61 ача ĕçлерĕ. Кунсăр пуçне вĕренӳ çулĕ вăхăтĕнчи ноябрь, январь, апрель уйăхĕсенче пурĕ 186 ача договорсем тăрăх ĕçлерĕ. Калама пултаратăп, çакăн пек ĕçлеме май пурри шкула та пысăк пулăшу пулса тăрать. Акă каникул вăхăтĕнче ĕç бригадисем тăрăшнипе шкул тавра тытнă картана тĕппипех юсаса çĕнетрĕмĕр, мастерскойĕнчи хатĕрсене çĕнĕ вырăна – гараж комплексне куçарса пӳлĕм йĕркелерĕмĕр. Ачасемпе пĕрле О.М. Перлова учитель çăвĕпех тăрăшрĕ. Июнь уйăхĕнче договорпа ĕçленисем ĕç укçине 975-шер тенкĕ илчĕç. Çапла шкулта вĕренекенсен ĕçпе канăвне пурнăçпа çыхăнтарса, паянхи кун ыйтнă пек йĕркелесе пыратпăр.

Самантпа усă курса пур учителе те, ачасене те, çавăн пекех ашшĕ-амăшĕсене те çитсе килекен çĕнĕ вĕренӳ çулĕпе саламлатăп. Пурин те сывлăхĕсем çирĕп пулччăр.

**– Тавах калаçушăн.**

**Н. НИКОЛАЕВА калаçнă.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: çу кунĕсем шкулта хаваслă иртрĕç.**

Сывлăх

# «Васкавлă пулăшу» васкать

2-10-03 номерпе килекен шăнкăравсем çине яланах çынсене пулăшма хатĕр медицина ĕçченĕсем ырă кăмăлпа хуравлаççĕ, кĕçех пулăшу çитессине пĕлтереççĕ. Вĕсем – васкавлă пулăшу службинче кунне-çĕрне пăхмасăр вăй хуракансем. Мĕн тĕрлĕ кăна пулăшу пама тӳр килмест пуль вĕсен çынсене!

Çак ĕçри лару-тăрупа интересленсе Муркашри тĕп больницăн васкавлă пулăшу уйрăмне çитрĕм. А.А. Сергеев аслă фельдшер шăпах шăнкărав йышăнать. Хуравсене пĕр пăлханусăр парать, хăйĕн ыйтăвĕсене те çынна лăпланма пулăшакан сасăпа калать. «Часах çитетпĕр. Кĕтĕр», – терĕ те вăл шăнкăравлакана юлашкинчен, васкавлă пулăшу бригади Якаткассине тухса кайрĕ...

Çапла вара 1979 çулхи май уйăхĕнчен пуçласа кашни талăк иртнĕ. Пин-пин çыннăн пурнăçне çăлса хăварассишĕн тăрăшаççĕ Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ район больницинчи, Муркашри тĕп больницăри васкавлă пулăшу уйрăмĕсен тата Турайри филиалăн ĕçченĕсем. Паянхи кун Муркашри уйрăмăн ертӳçи пулса Н.А. Артемьева тăрăшать. Вăл каланă тăрăх кăçалхи пĕрремĕш çур çулта васкавлă пулăшу машинисем районĕпе пурĕ 3224 хут тĕрлĕ адрессемпе çынсене вăхăтра пулăшу пама çула тухнă. Юрать-ха асфальт сарнă çулсем нумайлансах пыраççĕ. Пур чухне те, паллах, машинăпа алăк умне пыма май çук, анчах кашни ял пуçнех çитме пулать. Васкавлă пулăшу ĕçченĕсен шăнкăрав илнĕ хыççăн палăртнă вырăна 20 минутран кая юлса çитмелле мар. Ку çапла пулса пырать те. Харăсах темиçе чĕнӳ пулсан е ялĕ инçерех вырнаçнине пула çеç вăхăт тăсăлать.

– Тата мĕнле чăрмавсем пур ĕçре? – ыйтатăп Надежда Александровнаран.

– Малтанах çулсен проблеми пулнă пулсан, халĕ ку тĕлĕшпе ытлашши чăрмавсемех çук темелле. Анчах та çуртсем çинче номерсене кăтартманни тепĕр чух ирĕксĕрех вăхăта çухаттарать. Уйрăмах çак лару-тăру япăххи Оринин ял тăрăхĕнче палăрать. Шыратăн вара хăш килте пире кĕтеççĕ-ши тесе. Вăхăчĕ малаллах чупать, чирлĕ çын кĕтет... «Сывлăх» нацпроектпа килнĕ çĕнĕ машинăсем ĕçе çăмăллатма май параççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем çинче те малтанхинчен вăйлăрах оборудовани. Каласа хăвармалла, «Сывлăх» нацпроектпа района 5 çĕнĕ машина килнĕ, вĕсем пурте ĕçлеççĕ. Пулăшу парассине те РФ Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерстви приказĕпе килĕшӳллĕн стандартлă майпа паратпăр. Кашни чире сиплеме мĕнле эмелсемпе усă курмаллине çырса панă, эпир те хамăрăн ĕçре çавсемпе усă куратпăр.

Пур чухне те эмелсемпе усă курма май килмест. Теприсем «Васкавлă пулăшу» çитиччен вилсе те каяççĕ. Ку вăл – вăхăтра пулăшу ыйтса шăнкăравламаннин сăлтавĕ. Тепĕр чух темшĕн-çке эпир чир иртсе каясса медицина ĕçченĕсем пулăшассинчен те ытларах ĕненетпĕр. Çакна пулах кăçалхи çур çулта 27 çын пурнăçĕ татăлнă.

Нумай чух çынсем сасартăк чирлесе ӳкнипе, травмăсем пулнипе, инкексенче суранланнипе васкавлă пулăшу машини çула тухать. Вăрттăнлăх мар ĕнтĕ, ӳсĕр е мухмăрла çынсем патне те час-часах çитеççĕ пулăшу паракансем. Кăçалхи çур çулти цифрăна илсе кăтартас пулсан ку 248 чĕнӳпе танлашнă. Мĕн пур чĕнӳсен 8 проценчĕ. Сахал мар. Ӳсĕрле вара суранĕсем те нумайрах. Сурансем тенĕрен, тĕрлĕ преступленисен вырăнне те тухма тивет медработниксен. Çавăн пек криминаллă лару-тăрусенче вĕсем милици ĕçченĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлеççĕ. Пĕрпĕрне пулăшса ĕçленине вара, паллах, нимĕн те çитмест.

Эрехпе наркăмăшланнине те ĕç практикинче тĕл пулман мар васкавлă пулăшу службинче ĕçлекенсем. Эмелсем ĕçсе наркăмăшланнин сăлтавĕ вара ытларах чух çынсем ятарласа леш тĕнчене каяс тенипе çыхăннă. Кăçалхи 6 уйăхра кунашкаллисем çирĕм çын ытла пулнă. Паянхи пурнăç вăйлă характерлă çынсене килĕштерет пулас. Хăйне хăй пĕтерекен çынна вара вĕсен шутне кĕртеймĕн...

Чĕре чирĕсемпе, юн пусăмĕпе тата инфарктсемпе нумай çын асап курать. Çавăнпах чĕнӳсен 20 проценчĕ сасартăк сиксе тухнă чирсем çине килет. Апла пулсан хамăрăн сывлăхшăн маларах тăрăшма пуçламалла мар-ши? Диспансеризацинчен тытăнса хамăрăн кун йĕркине кирлĕ пек йĕркелени таранах кĕрет ку ĕçе.

– Çакăн пек йывăр чирлисем патне пулăшу пама кайни те вырăнлă. Анчах тепĕр чух суя вызовсем те пулаççĕ. Пĕлтернĕ вырăна çитетпĕр те, телефонпа асăннă çынни çук, пулман та иккен ун пекки. Ытларах çамрăксем çапла «шӳтлеççĕ». Пире вара, тен, çав вăхăтра чăннипех те чирлĕ çын кĕтет, – хушăран çапла лару-тăру пулнишĕн пăшăрханать васкавлă пулăшу уйрăмĕн ертӳçи.

Çĕнĕ технологипе тан пыраççĕ кунта та. Халĕ васкавлă пулăшу уйрăмне килекен шăнкăравсем йăлтах ятарлă хатĕр çине çырăнса пыраççĕ. Ку - ĕçри тепĕр пулăшу.

«Васкавлă пулăшу» ушкăнĕ вара, тем тесен те, водительсĕр тулли ушкăн пек мар. Ю.В. Степанов водитель çак ĕçре 25 çула яхăн вăй хурать. Районти кашни яла, кашни урама «куç хупса» çитме те пултарать ĕнтĕ вăл. Ответлăха туйса ĕçлекен водительпе вара пулăшу ушкăнне те çула тухма шанчăклăрах.

**Н. НИКОЛАЕВА.**


Пĕлтерӳсем. Объявления

**Требуются газорезчики в д. Москакасы. Зарплата от 12000 рублей. Тел.: 883541-66222; 89053415311.** 2-2.

**Куплю старинные монеты, самовары. Дорого. Тел.: 8-910-388-01-61; 8-960-190-67-34.** 6-8.

**Цемент М–400 в мешках 40 кг. оптом и в розницу, доставка.Тел.: 8-927-849-76-75; 8-927-849-76-74.** 5–5.

**Реализуем: кольца для колодцев ж/б, армированные 0,7м, 1,0 м, 1,5 м. Крышки, днища к ним, столбы ограждения 1,9 м, 2,2 м, фундаментные блоки. Доставка манипулятором. Тел.: 8-902-327-82-52.** 10-16.

**КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения, выдает займы. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41.** 8-20.

**Продаю обрезные, необрезные доски от 2 м. до 6 м., штакетник, горбыль. Все в кредит!!! Трубы б/у. Дрова обрезки бенсплатно!!! (На территории «Моргаушрайбыт»). Тел.: 8-905-345-31-09.** 2-10.

**Реализуем гравмассу по цене 650 руб. за 1 тонну (г. Ядрин). Тел.: 89053406163; 89603002162, Владимир.** 4-5.

**ИП Ершов А.В. делает на заказ банные печи любой формы, а также гаражные, уличные ворота. Продает угольники, швеллера, трубы на забор и ворота. Доставка. Обращаться по тел.: 8-919-655-21-51 (Моргауши, плодокомбинат).** 3-6.

**СПУТНИКОВОЕ ТЕЛЕВИДЕНИЕ от 3500 рублей, тел.: 8-927-666-93-95 . СПУТНИКОВЫЙ ИНТЕРНЕТ.** 4-8.

**КАРТЫ ОПЛАТЫ ОПТОМ. (Мегафон, Смартс, Билайн, МТС, ON). Тел.: (8352) 62-81-14, 29-68-68.** 2-8.

**Продаю блоки керамзитобетонные, цемент М 400, М 500, гравмассу, песок речной, щебень кирпичный, щебень гранитный. Имеется в продаже пшеница, ячмень.**
**Обращаться по адресу: (Моргаушский плодокомбинат): тел.: 8-919-666-55-77; 8-917-661-93-11; 2-18-80.** 3-3.

**Продаю кирпич: силикатный, красный одинарный М-150, М-125, красный полуторный пустотный М-125, КББ, керамзит, гравмассу, красный половняк.**
**Доставка. Документы.**
**Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97.** 10-14.

**Продаю квартиру в центре с. Моргауши. Тел.: 8-927-842-47-90.**

**Куплю бычков, телок и коров живым весом и мясом. Тел.: 8-909-304-08-81.**

**ЗАО «МСО «Моргаушская» набирает бригаду каменщиков, оплата за 1 куб. м. кладки – 1100 рублей. Работа в селе Моргауши. Оплата своевременная.**
**Обращаться: ЧР, Моргаушский район, д. Юнгапоси, ул. Ягодная, 21. Тел.: 32-2-23; 2-21-29.** 1-2.


Коллектив МОУ «Моргаушский лицей» выражает глубокое соболезнование директору лицея Смирнову Н.Е., его семье и близким в связи с тяжелой утратой – смертью матери

**СМИРНОВОЙ АГРЕППИНЫ МИХАЙЛОВНЫ.**

Чуманкассинчи вăтам шкул коллективĕ кунта библиотекарь пулса ĕçлекен З.М. Федорован тата технологие вĕрентекен И.М. Федорован

**АМĂШĔ**

вилнĕ пирки çывăх çыннисемпе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Мăн Сĕнтĕр больницин коллективĕ васкавлă пулăшу уйрăмĕнче водитель пулса ĕçлекен И.И. Димитриевăн тата В.И. Пигачева автоклавщицăн

**АМĂШĔ**

нумай вăхăт хушши чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки вĕсен çемйисемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланса пĕлтерет.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения сельскохозяйственного производства, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:021001:416, местоположение: участок расположен: Ильинское сельское поселение, территория землепользования СХПК «Хлебороб», в северной части квартала 21:17:021001, площадью 35 га.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.


**Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

**Зам. гл. редактора В.Л. ШАПОШНИКОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.**
**ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38. Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru**

**Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.**
**Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.**

**Объем 1 усл. печатный лист.**
**Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.**
**Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.**

**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**
**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Дежурный по номеру Белов А.П.**
**Номер подписан 26.08.2008 г.**
**Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3594.**

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.